Надежда СИЛПИ
Людмила КИНЕР

# Çăлтăрпи



[illegible] наши

библиотекарям

автограф

29.12.2016 г.

Людмила Шнеер

[illegible]

Надежда СИЛПИ
Людмила КИНЕР

# Çăлтăрпи

Юрăсем



Шупашкар - 2014

УДК 784
ББК 85.9
С 36

Силпи Н., Кинер Л., Çăлтăрпи, юрăсем.
Шупашкар, 2014 ç. - 16 с.

«Çăлтăрпи» кĕнекене паллă сăвăçăн Надежда Силпин сăввисемпе çырнă юрăсем кĕнĕ. Вĕсене Людмила Кинер композитор кĕвĕленĕ.

Юрăсене пултарулăх коллективĕсенче ушкăнпа, пĕччен тата хорпа юрлама хывнă.

© Силпи Н., 2014
© Кинер Л., 2014

# Вăйă

Сăвви Н. Силпин

Кĕвви Л.Кинерĕн




1. Ирхине ирех тăратăп,
   Тăхăнатăп, тумланатăп.
   Пит-куçа çуса илетĕп,
   Ĕçлеме эп пикенетĕп.

Хушса юрламалли:

2. Чăх-чĕппе апат паратăп,
   Сыснана тăрантаратăп.
   Пŭрт-çурта тирпейлесен,
   Анне савăнĕ килсен.

Хушса юрламалли.

Ĕнене суса кĕретĕп, па-па-па, па-па-па,
Пăрушне те ĕçтеретĕп, па-па-па, па-па-па.
Кŭршĕри мĕнпур выльăха, ха-ха-ха, ха-ха-ха,
Ăсататăп, ăсататăп улăха, ха-ха-ха.

# Ан ёҫ тек пӑрлӑ сӗте!

Сӑвви Н. Силпин

Кӗвви Л.Кинерӗн




1. Санюк чирлӗ, тӑраймасть,
   Шӑлӗ шыҫнӑ - чупаймасть.
   Шкула мӗскӗн каяймасть,
   Хускану та тӑваймасть.
   Шкула мӗскӗн каяймасть,
   Хускану та тӑваймасть.

Хушса юрламалли:

О-па-па, о-па-па,
Шкула мӗскӗн каяймасть.
О-па-па, о-па-па,
Хускану та тӑваймасть.

2. Хӗрхенет Сашук ӑна,
   Ун патӗнче вӑл хӑна.
   Ёҫтерет чейне кула!
   "Ан ёҫ тек пӑрлӑ сӗте!
   Ёҫтерет чейне кула!
   "Ан ёҫ тек пӑрлӑ сӗте!

Хушса юрламалли.

3. Тухтӑр ыр канаш парать,
   Итлеменшӗн пит ятлать:
   "Кашни кун шӑлна тасат,
   Вара курмӑн эс асап".
   "Кашни кун шӑлна тасат,
   Вара курмӑн эс асап".

Хушса юрламалли.

# Утарта

Сăвви Н. Силпин | Кĕвви Л.Кинерĕн

Васкамасăр




1. Кăвак çеçпĕл эп тататăп
Утарта - уçланкăра.
Киленсе кăна тăратăп,
Пит илемлĕ вăрманта!
Киленсе кăна тăратăп,
Пит илемлĕ вăрманта!

2. Авă, çеçпĕл лăшт! Силленчĕ
Çÿçенсе сив сывлăмран.
Сар хĕвел çÿле çĕкленчĕ,
Тусăм, тăр-ха ыйхăран.
Сар хĕвел çÿле çĕкленчĕ,
Тусăм, тăр-ха ыйхăран.

3. Ырă шăршă, ав, сараççĕ
Çеçкери шур лантăшсем.
Пĕрлĕхен пухма утаççĕ
Пĕрле ÿснĕ тантăшсем.
Пĕрлĕхен пухма утаççĕ
Пĕрле ÿснĕ тантăшсем.

# Анне — чи хакли

Сăвви Н. Силпин

Кĕвви Л.Кинерĕн




1. Тўпере ăшши çук хĕвелрен,
Çут шевле вăл сапать тўперен.
Пурнăçра пахи çук аннерен,
Вăл ўстернĕ пире пĕчĕкрен.
Пурнăçра пахи çук аннерен,
Вăл ўстернĕ пире пĕчĕкрен.

2. Вăтăлать-çке аннем çулсерен,
Вăй-хăват, ай, кўрер, кунсерен.
Кĕмĕл çўç ан вĕçейтĕр пуçра,
Сар хĕвел вăй вылятăр куçра.
Кĕмĕл çўç ан вĕçейтĕр пуçра,
Сар хĕвел вăй вылятăр куçра.

3. Парнелер аннене телей çеç,
Урокра т(ă)ваттă, пиллĕк ил çеç.
Спортпа туслă пулса çитĕнер,
Çĕршыва, аннене хўтĕлер.
Спортпа туслă пулса çитĕнер,
Çĕршыва, аннене хўтĕлер.

# Ту зарядка, ан ӳркен

Сăвви Н. Силпин　　　　　　　　　　Кĕвви Л.Кинерĕн




1. Сар хĕвелпе тăр ирех, тăр ирех,
   Кахаланса выртиччен, выртиччен.
   Уçă сывлăш сиплĕрех, сиплĕрех,
   Компьютерпа лариччен, лариччен.

Хушса юрламалли:

　Уçă сывлăш, шыв, сар хĕвел -
　Пирĕн шанчăклă туссем.
　Ту зарядка, ан ӳркен -
　Çирĕп пулăн, ĕненсем.

2. Уçă сывлăшра пулма, пулма
   Тăрăш эсĕ яланах, яланах.
   Каçхине кăшт çăвăнма, çăвăнма
   Хăнăх, пулăн сывăрах, сывăрах.

Хушса юрламалли.

3. Çулла футбол выляма, выляма
   Кăмăл ту эс юлташпа, юлташпа.
   Хĕлле - хоккей выляма, выляма,
   Йĕлтĕрпеле ăмăртма, ăмăртма.

Хушса юрламалли.

# Вӑл çеç юлчӗ «хуçара»!

Сӑвви Н. Силпин

Кӗвви Л.Кинерӗн




1. Шутлав турӗ Марине,
Чӗрмелерӗ урине.
Кайсан куккӑш пасара
Вӑл çеç юлчӗ "хуçара".

Хушса юрламалли:

Аййа-раййа, аййа-раййа,
Кайсан куккӑш пасара.
Аййа-раййа, аййа-раййа,
Вӑл çеç юлчӗ "хуçара".

2. "Фермер пулӑп", - тет ӳссен,
"Тытӑп акӑшсем-туссем.
Çывӑхра, çут кӳлӗре
Ишӗç", - пысӑк ӗмӗтре.

Хушса юрламалли:

Аййа-раййа, аййа-раййа,
Çывӑхра, çут кӳлӗре.
Аййа-раййа, аййа-раййа,
Ишӗç", - пысӑк ӗмӗтре.

3. Килкартийӗ янӑрать:
- Ки-как! Ки-как! Хур сасси.
Симӗс курӑк таптанать,
Пӗр вӗçӗмсӗр хур ташши.

Хушса юрламалли:

Аййа-раййа, аййа-раййа,
Симӗс курӑк таптанать,
Аййа-раййа, аййа-раййа,
Пӗр вӗçӗмсӗр хур ташши.

# Чи хаваслă кун паян

Сăвви Н. Силпин

Кĕвви Л.Кинерĕн




1. Чи хаваслă кун паян:
   Çитĕнтĕн, шкула каян.
   Çĕн портфель сан аллунта,
   Савăк кăмăл сассунта.

Хушса юрламалли:

Çут пĕлĕт салам ярать,
Шăнкăравĕ йыхăрать.
Пĕлӳ алăкне уçать -
Çĕнĕлĕх пĕрле утать.

2. Чи явапла кун паян:
   Пĕлӳ ытамне пыран.
   Шанăç пар учителе,
   Малта пыр вĕренӳре.

Хушса юрламалли.

3. Пĕлӳ кунне кам пĕлместь,
   Çак уява кам кĕтместь.
   Юлĕ кашнин чĕринче,
   Çăлтăр çутĕ çул çинче.

Хушса юрламалли.

# Утăра

Сăвви Н. Силпин

Кĕвви Л.Кинерĕн




1. Янăрать паян çаран, янăрать
   Çамрăксем юрланипе, çамрăксем.
   Çил килет те катаран, çил килет,
   Çупăрлать вăл аллипе, çупăрлать.

Хушса юрламалли:

Çил килет, çил килет,
Катаран килет.
Çупăрлать, çупăрлать,
Аллипе çупăрлать.

2. Ваш та ваш! Касать çава, ваш та ваш,
   Çўллĕ ўснĕ курăка, курăка.
   Ывăнмарăм çав çавах, çав çавах,
   Чи малта эп, курăр-ха, чи малта!

Хушса юрламалли.

3. Тĕлĕнет анне манран, тĕлĕнет:
   - Пултарулла, - тет, - ĕçчен, - тет, - ĕçчен. -
   Вăл çапла мухтанăран, вăл çапла,
   Тăрăшсах ĕçлем касчен, тăрăсшах.

Хушса юрламалли.

# Ярӑнас килет мӗнле!

Сӑвви Н. Силпин

Кӗвви Л.Кинерӗн




1. Акӑ ёнтӗ сивӗтет,
Çурçӗр çилӗ чӗпӗтет.
Ирсерен тата шӑнтать,
Хӗл Мучи кӑчӑк туртать.

Хушса юрламалли:

Тра-ля-ля-ля, тра-ля-ля,
Ирсерен тата шӑнтать,
Тра-ля-ля-ля, тра-ля-ля,
Хӗл Мучи кӑчӑк туртать.

2. Вӑрманта та майӗпен
Шӑпланаççӗ сасӑсем.
Хӑçан çитӗ-ши хӗлле?
Ярӑнас килет мӗнле!

Хушса юрламалли:

Тра-ля-ля-ля, тра-ля-ля,
Хӑçан çитӗ-ши хӗлле?
Тра-ля-ля-ля, тра-ля-ля,
Ярӑнас килет мӗнле!

# Ёмӗт

Сӑвви Н. Силпин

Кӗвви Л.Кинерӗн

Ҫӗкленӳллӗн




1. Сар хӗвел ҫиҫет ҫӳл тӳпере,
   Сирӗлсех пырать чаршав тӗтре.
   Куҫ тулли илем, ирех хире
   Путене чӗнет ӗҫе пире.
   Куҫ тулли илем, ирех хире
   Путене чӗнет ӗҫе пире.

2. Пыл шӑрши. Ыраш, ав, шӑркара,
   Киленсе вӗҫет тӗкӗл тура.
   Кӑштахран, ак, тухӗҫ вырмана,
   Тен, атте пӗрле чӗнет мана?
   Кӑштахран, ак, тухӗҫ вырмана,
   Тен, атте пӗрле чӗнет мана?

3. Тытӑп хаваспах хир карапне,
   Ямӑп нихӑҫан атте ятне.
   Вӑхӑтра пухасчӗ тыр-пула -
   Хаклӑран та хаклӑ ыр мула.
   Вӑхӑтра пухасчӗ тыр-пула -
   Хаклӑран та хаклӑ ыр мула.

# Ылтăн кĕркунне

Сăвви Н. Силпин

Кĕвви Л.Кинерĕн




1. Çитрĕ, çитрĕ, тусăмсем,
Ырă, ылтăн кĕркунне.
Сарă, хĕрлĕ çулçăсем
Тăкăнассĕ çул çине.

Хушса юрламалли:

Вăрманта, уçланкăра -
Пиçнĕ хĕп-хĕрлĕ палан.
Катара - юманлăхра -
Кăрăç савăнса пухан.

2. Кур, ĕшеннĕ кĕркунне -
Тек хывать капăр тумне.
"Ылтăн çумăр" тăкăнать,
Пĕчĕк чĕрĕп такăнать.

Хушса юрламалли:

Таш ташлассĕ çулçăсем
Шухă çил ытамĕнче.
Выльăр-кулăр тусăмсем,
Кĕрхи кун уявĕнче.



# Тупмалли

Вăйă ........ 3
Ан ĕç тек пăрлă сĕте! ........ 4
Утарта ........ 5
Анне - чи хакли ........ 6
Ту зарядка, ан ÿркен ........ 7
Вăл çеç юлчĕ «хуçара»! ........ 8
Чи хаваслă кун паян ........ 9
Утăра ........ 10
Ярăнас килет мĕнле! ........ 11
Ĕмĕт ........ 12
Ылтăн кÿркунне ........ 13

Литературно-художественное издание

Надежда СИЛПИ
Людмила КИНЕР

# Ҫӑлтӑрпи

*Юрӑсем*

# Звездочка

*Песни*

Сборник песен с нотами на чувашском языке.
Книга издается в авторской редакции.

Подписано в печать 05.12.2014 г.
Формат 60х90. Бумага офсетная.
Печать офсетная. Гарнитура Arial
Уч. печ. лист 0,87. Тираж 1000. Заказ №506
Отпечатано в ООО «Своя типография».
г.Чебоксары, ул.Текстильщиков, 8




# Ачалăхри хаваслăх, ачалăхри ачашлăх

